

# Йывӑҫ тымарӗпе ҫирӗп, этем – ҫемйипе

2024 Ҫемье ҫулталӑкӗ

Проект Чӑваш Республикин Цифра аталанӑвӗн, информаци политикин тата массӑллӑ коммуникацисен министерствин пулӑшӑвӗпе пичетленет. Авторӗ – Ирина Яковлева

## Пур енӗпе те маттур, пултаруллӑ



**Шӗнер Ишек тӑрӑхӗнчи Ольгӑпа Валерий Орловсем – чӑннипех те ырӑ чунлӑ ҫынсем. Вӗсем хӑйсен ҫунатти айне ҫичӗ ачана хӳтте илнӗ.**

Малтанах вӗсен ҫемйинче вунпиллӗкри Маргарита, унтан Дима, Вася, Лиза, Катя, Ангелина тата Катюша хушӑннӑ. Хӑй вӑхӑтӗнче мӑшӑрсем Калининӑри шкул-интернатра ӗҫленӗ май ачасене воспитани парас ӗҫ вӑрттӑнлӑхӗсене аван пӗлеҫҫӗ, ашшӗ-амӑшӗсӗр ача йывӑрлӑхра пулнине чӗре патне илеҫҫӗ вӗсем.

Ольга Владимировнапа Валерий Леонидович ачисемшӗн чӑннипех те ырӑ тӗслӗх. Вӗсем сывӑ пурнӑҫ йӗркине тытса пыраҫҫӗ. Ывӑлхӗрӗсен воспитанийӗшӗн, пӗлӗвӗшӗн хытӑ тӑрӑшаҫҫӗ. Хӑйсем те музыкӑпа, театрпа кӑсӑкланнӑран, кӗҫӗннисене те илемлӗхе туйма, курма вӗрентеҫҫӗ.

Юлашки вӑхӑтра ку ҫемьене округра иртекен культура мероприятийӗсенче те час-часах курма тытӑнтӑмӑр. Валерий Леонидович гитарӑпа ӑста вылять, ҫавӑнпа та сцена ҫинче те Орловсем ку инструмент майӗн юрлама кӑмӑлласҫҫӗ.

Пурне те килӗшекен йӑла – касҫерен пурте пӗрле пухӑнса сӑмавартан чей ӗҫнӗ май гитарӑпа юрласси. Ҫакӑ таланта ӳстернипе пӗрлех ҫемьене те пӗтӗҫтерет.

Унсӑр пуҫне, Орловсем пӗрле ҫулҫӳреве тухма та кӑмӑлласҫҫӗ. Ачасене историлле вырӑнсене илсе ҫитерни, мӑнастирсемпе чиркӳсенче пулни тавракурӑмне ӳстерме пулӑшнине аван пӗлеҫҫӗ вӗсем.

Пӗтӗмпе вара Орловсен сакӑр ача. Тач тӑван хӗрӗ Шупашкарта.

Кӑҫал Орловсем округра иртнӗ «Ҫулталӑк ҫемйи» конкурсӑн ҫӗнтерӳҫисем пулса тӑнӑччӗ. Ҫак кунсенче вара вӗсем ашшӗ-амӑшне улӑштаракан ҫемьесен «Ҫемье вучахӗ» республикӑри конкурсӗнче палӑрнӑ, «Илемлӗ пултарулӑх» номинацире ҫӗнтерӳҫӗ пулса тӑнӑ. Пӗтӗм ҫемьепе вӗсем «Эпир Шӗнер Ишеке каятпӑр» юрра юрланӑ. Ӑна тӑван ял ҫыннисене, кӳршисене халалланӑ.

«Тӑван ялта, шкулта вӗсемсӗр пӗр мероприяти те иртмест. Ҫав тери маттур вӗсем. Кил-ҫурт тытса пыраҫҫӗ, пахчаҫимӗҫ ӳстереҫҫӗ. Пур енпе те хастар», – терӗ Орловсем пирки вырӑнти шкул директорӗ Татьяна Скворцова.

**Светлана ЧИКМЯКОВА**

## Ҫемье ӑшши вӑй-хӑват парать

**Юнашар хаклӑ та ҫывӑх ҫынсем пулни телеех ҫав. Вӗсен ӑшшине, кирек мӗнле лару-тӑрура та шанчӑклӑ пулӑшӑвне туйни пурнӑҫри ҫирӗп тӗрев пулса тӑрать.**

Акӑ, Хураҫырмара пурӑнакан Нина Григорьевна Степанован паян вунтӑватӑ мӑнукпа сакӑр кӗҫӗн мӑнук! Хӑйсем вӗсем мӑшӑрӗпе виҫӗ хӗрпе икӗ ывӑла кун ҫути парнеленӗ. Ҫакӑ мар-и вара чӑн пуянлӑх?! Вӗсем юратупа ҫавӑрса илни, ӑшӑ та ырӑ сӑмахпа хавхалантарни ӗнтӗ ватӑ ҫынна вӑрӑм ӗмӗр ӗмӗрлеме вӑй-хӑват парать. Иртнӗ уйӑх вӗҫӗнче Нина Григорьевна сумлӑ датӑна – 90 ҫул тултарнине – паллӑ тунӑ.

Ҫуралнӑ кунӗнче ӑна пысӑк хӑнасем – Вӑрнар округӗн пуҫлӑхӗн заместителӗ Светлана Шашкарова, Ершепуҫ территори пайӗн пуҫлӑхӗ Эрколий Молчанов – килне ҫитсе саламланӑ. Тӑхӑр теҫетке урлӑ каҫнӑ юбиляра малашне те ҫирӗп сывлӑхлӑ пулма, ҫемье хӳттинче тата нумай ҫул савӑнса пурӑнма суннӑ. Хӑй вӑхӑтӗнче тӑван тӑрӑх аталанӑвне пӗлтерӗшлӗ тӳпе хывнӑшӑн та тав тунӑ. Сӑмах май, Нина Степанова чылай вӑхӑт совхоз-техникумӑн хуҫалӑхӗнче тӗрлӗ должноҫсенче тӑрӑшнӑ.

Ершепуҫ культура ҫурчӗн ӗҫченӗсем вара ятлӑ-сумлӑ ентешне илемлӗ юрӑсемпе савӑнтарнӑ.

**Хамӑр инф.**



## Ачисемшӗн ырӑ тӗслӗх

Нумай ачаллӑ ӗҫчен ҫемьесем – ҫӗршыв пуласлӑхӗ, тӗрекӗ. Пӗр-пӗрне юратни, хисеплени, ӑнланни, итлеме пӗлни, йывӑр вӑхӑтра пулӑшма васкани – ҫак никӗс ҫинче тытӑнса тӑраҫҫӗ те хутшӑнусем. Ҫирӗп ҫемьесенче ашшӗ-амӑшӗн ырӑ тӗслӗхне курса ӑса хывнӑ ачасем малашне хӑйсем те ҫавӑн пек маттур пуласси иккӗлентермест



Уравӑшра пурӑнакан Аляховсен нумай ачаллӑ ҫемйи ырӑ сӑмахсене ҫеҫ тивӗҫ. Ҫемье пуҫӗ, Владимир Николаевич, мӗн пӗчӗкренех ӗҫре пиҫӗхсе ӳснӗ. Унӑн ашшӗ ӗмӗр тӑршшӗпех тӑван колхозра трактористра вӑй хунӑ. Тӗслӗхлӗ ӗҫӗшӗн хисеплӗ механизатор ятне тивӗҫнӗ. Вӑл ывӑлне те техникӑпа кӑсӑклантарма пултарнӑ. Владимир шкулта вӗреннӗ вӑхӑтрах ҫуллахи каникул вӑхӑтӗнче «Мир» совхозра комбайнерӑн пулӑшуҫинче вӑй хунӑ. Пулас профессине те юратнӑ техникӑпа ҫыхӑнтарма шутланӑ. Уравӑшри шкула пӗтерсен Вӑрнарти училищӗре водитель-механик, тракторист специальноҫӗсене алла илнӗ. Хыҫҫӑн ҫарта хӗсметре тӑнӑ. Унтан таврӑнсан Владимир Николаевич 29-мӗш училищӗн вӗренӳ хуҫалӑхне вырнаҫнӑ. Хӑйӗн тивӗҫӗсене яланах тӳрӗ кӑмӑлпа, яваплӑха туйса пурнӑҫланӑ.

Мӑшӑрӗ тӑван ялӗнченех. 2005 ҫулта хастар каччӑ кӳршӗ хӗрӗпе – Надеждӑпа – пӗрлешсе ҫирӗп ҫемье чӑмӑртанӑ. Ҫамрӑксем ҫӗнӗ кил-ҫурт, мунча тата хуҫалӑхри ытти хуралтӑсене хӑпартса лартнӑ. Карта тулли выльӑх-чӗрлӗх усраҫҫӗ, пахчаҫимӗҫ лартса ҫитӗнтереҫҫӗ. Пурнӑҫри йывӑрлӑхсене яланах пӗрле, пӗр-пӗрне пулӑшса парӑнтараҫҫӗ. Савӑнӑҫне те, хуйхи-суйхине те пӗрле пайласа туслӑ пурӑнаҫҫӗ Аляховсем.

Хальхи вӑхӑтра Владимир Аляхов Вӑрнарти аш-какай комбинатӗнче вӑй хурать. Ҫулла вӑл хуҫалӑхӑн уй-хирӗнче комбайнерта тӑрӑшать. Юратнӑ ӗҫӗ уншӑн чун киленӗҫӗ. Ӑста та пултаруллӑ специалист ӗҫтешӗсем хушшинче ырӑ ят-сум ҫӗнсе илнӗ. Мӑшӑрӗ – Надежда – Вӑрнарти «Солнышко» ача садӗнче тимлет. Вӑл ҫемье ӑшшине, кил вучахне упраканӗ.

Аляховсем тивӗҫлӗ воспитани парса тӑватӑ ача пӑхса ӳстереҫҫӗ. Хӗрӗсем ашшӗ-амӑшӗ пекех маттур та пултаруллӑ. Асли – Кристина – Санарпуҫ шкулне ӑнӑҫлӑ пӗтерсе И.Я.Яковлев ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх педагогика университетӗнче историпе акӑлчан чӗлхин уйрӑмӗнче ӑс пухать. Каринӑпа Каролина шкулта вӗренеҫҫӗ. Чи кӗҫӗнни – Катюша – ача садне ҫӳрет. Вӗсем ашшӗ-амӑшне кил хуҫалӑхӗнче пулӑшаҫҫӗ, пушӑ вӑхӑтра Уравӑш клубӗ ҫумӗнчи илемлӗ пултарулӑх кружокне ҫӳреҫҫӗ. Юрра-ташша ӑста. Май килнӗ чухне ашшӗ-амӑшӗпе пӗрле спорт ӑмӑртӑвӗсене, тӗрлӗ конкурссене активлӑ хутшӑнаҫҫӗ.

Аляховсен туслӑ та ӗҫчен ҫемйи ялйышра хисепре. Владимир Николаевич пулӑшу ыйтакансене хирӗҫлемест, хуҫалӑхӗнчи тракторӗпе ял ҫыннисене ҫӗр сухалама, курӑк ҫулса типӗтсе кӗртме тата ытти ҫӗр ӗҫӗсене пурнӑҫлама пулӑшать. Ҫывӑх ҫыннисем унпа тивӗҫлипех мухтанма пултараҫҫӗ.

**Оксана СЕМЕНОВА**

Тема тӑсӑмӗ 4-мӗш стр.

Газета «Çĕнтерӳ çулĕ» t.me/putpobedy21 Путь победыОК Путь Победы

Йывăç тымарĕпе çирĕп, этем – çемйипе

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пичетленет.

# Тараватлă çемьен ачисем те тараватлă

**Кăçал Çемье çулталăкĕ пулнăран Пăртас ялĕнчи Кумаляковсем çинчен каласа кăтартас терĕм. Ялта вĕсене пĕлмен çын çук та пулĕ. Çак хисеплĕ мăшăр ял-йышшăн ырă тĕслĕх шутланать, мĕншĕн тесен çемье пуçĕпе Елизар Ивановичпа, ялта ăна Виссар ятпа лайăх пĕлеççĕ, унăн мăшăрĕ Анна Романовна пилĕк ача çуратса, тĕрĕс воспитани парса ĕçе юратма, çынна хисеплеме вĕрентсе ӳстернĕ, çĕршывшăн усăллă çынсем тума пултарнă.**



Паян вĕсен кашнин хăйĕн çемйи пулсан та, пĕр-пĕринпе тачă çыхăну тытаççĕ, хăйсем хушшинче çав тери çураçуллă пурăнаççĕ, хуйхă-суйхине те, савăнăçне те пĕрле пайлаççĕ. Çав вăхăтрах ял халăхĕпе тус-юлташĕсене те хисепе хураççĕ.

Елизар Ивановичпа Анна Романовна иккĕшĕ те Пăртасран, юнашар урамра ӳснĕ. Пĕр калаçура Елизар Иванович каласа пани асра. Иртнĕ ĕмĕрте ялти çамрăксем каçсерен урама вăййа тухнă, унта юрланă, ташланă. Пулас мăшăрне шăп çавăнта асăрханă вăл.

– Пăхатăп, пĕррехинче кӳршĕ урамри Анна ташша тухрĕ те унăн илемĕ, купăс çеммине май куçа илĕртекен сăпайлă хусканăвĕсем кăмăла кайрĕç. Вăт çак хĕре çавăрсан аван та… текен ĕмĕт çуралчĕ. Хыççăн ăна килĕшес тесе нумай тăрăшма тиврĕ, çав-çавах кăмăлне юрама, мăшăр пулма ӳкĕте кĕртме пултартăм, – аса илетчĕ Елизар Иванович.

Çапла вара 1960 çулта Кумаляковсен çĕнĕ çемйи çуралнă, ĕлĕкрен пыракан йăлапа тĕп килтен уйрăлса тухса шкула хирĕç панă çĕр участокĕнче йывăç çурт лартнă. Çăмăл пулман çамрăк мăшăра кил-çурт çавăрма.

– Виссар кунĕпе колхозра ĕçлесе ĕшенетчĕ пулин те каçпа вăрмана, лесничество уйăрса панă участока каштасем, çурт-йĕр тунă чух кирлĕ ытти хатĕрсем касма каяттăмăр. Вырăнне тата трактор-машина кĕме май çук çĕре паратчĕç те лаша кӳлсе кайма тиветчĕ, тулли лавпа яла çурçĕр иртсен тин таврăнаттăмăр, – аса илет паян Анна Романовна.

Каярахпа, ачисем ӳссе çитĕнсе пулăшма тытăнсан, Кумаляковсем йывăç пӳрт вырăнне кирпĕчрен купаласа хӳхĕм çурт лартрĕç, паян вăл «50 лет Чувашии» урама илем кӳрекеннисенчен пĕри. Елизар Иванович 30 çул ытла колхозра трактористра ĕçлерĕ, тăрăшнине кура «11-мĕш пилĕкçуллăх ударникĕ», «Ĕç ветеранĕ», икĕ хутчен «Социализмла ăмăртура мала тухнăшăн» медальсене тата «Чăваш АССР тава тивĕçлĕ механизаторĕ» хисеплĕ ята тивĕçнĕ. Шел, паян вăл пирĕн хушăра çук, йывăр чире пула 2014 çулхи ака уйăхĕн 17-мĕшĕнче пурнăçран яланлăхах уйрăлчĕ.

Анна Романовна та мăшăрĕ пекех вăрçă ачи, ĕçпе пиçĕхнĕ çын. Вăрçă тухсан тепĕр уйăхран çуралнăскер тата виçĕ уйăхрах ашшĕсĕр тăрса юлнăскер, ун чухнехи нушаллă пурнăçа тӳсмеллипех тӳснĕ. Çапах та ялти 7 çуллă шкултан вĕренсе тухма пултарнă. Хыççăн, 1954 çулхи çуллахи уйăхсенче, 13-ре кăна пулсан та, Вăрнарти кирпĕч заводĕнче ĕçе кӳлĕннĕ, кĕркуннепе колхоз ĕçне хутшăннă. 16 çула çитсен вербовкăпа Смоленск облаçне нимĕç фашисчĕсем аркатса хăварнă чукун çула юсанă çĕре тухса кайнă. Ку ĕçе пĕтерсе яла таврăнсан каллех колхозра нумай çул вăй хунă, унтан – шкулта техничкăра. Çăмăл пулман. Çурçĕр иртни виçĕ сехетре шкула çитсе кăмака хутма тивнĕ. Кăнтăрла вутă тиеме кайнă, каçалапа кăна таврăннă. Килсен мĕн çĕрлечченех классене тирпейлемелле пулнă.

Ачисем ашшĕпе амăшĕ ĕçе юратнине, ял-йышпа таракват пулнине, тăвансене хисепленине курса, çак паха енсене ăс-тăна хывса çитĕннĕ, çемьеленсен хăйсен ачисене те аслашшĕпе кукашшĕнчен, асламăшĕпе кукамăшĕнчен тĕслĕх илме вĕрентнĕ. Астăватăп, çак енсем Анна Романовнан 80 çулхи юбилейне пуçтарăннă 4 хĕрĕпе ывăлĕн, кĕрӳшĕсемпе кинĕн, йышлă тăванĕсен саламлă сăмахĕсенче те палăрчĕç. Мускавран, Чулхуларан, Шупашкартан килсе çитнĕ мăнукĕсемпе вĕсен мăшăрĕсем пĕрин хыççăн тепри саламлă тав сăмахĕсене калама тухсан çак çемье татулăхĕ пушшех те уççăн курăнчĕ.

Анна Романовнапа Елизар Иванович пуçарнă ăру йывăçĕ çултан çул аталанса пырать, çĕнĕрен çĕнĕ çамрăк туратсем хушăнаççĕ. Паянхи кун тĕлне Кумаляковсен 8 мăнукĕсĕр пуçне кĕçĕн мăнукĕсен шучĕ 10-а çитрĕ. Шупашкарти аслă хĕрĕпе Надьăпа Сергей Ивановсен Мускавра пурăнакан хĕрĕпе пĕр кĕçĕн мăнукĕ, Сергей ывăлĕпе Марина кинĕн икĕ хĕрпе пĕр ывăлĕ, ялта пурăнакан Зойăпа Радик Волковсен Чулхулари мăнукĕпе икĕ кĕçĕн мăнукĕ, Людăпа Валера Кораблевсен (шел, Валера Афганистанра службăра тăнă вăхăтра суранланнă пирки виçĕ çул каялла çĕре кĕчĕ) Вăрнарта пурăнакан хĕрĕпе ывăлĕ тата ултă мăнукĕ, амăшне ватлăхра çăмăллăх кӳрес шутпа Шупашкартан яла куçса килçурт çавăрнă Ольăпа Юра Ивановсен ывăлĕпе мăнукĕ Кумаляковсен рат пуянлăхĕ пулса тăраççĕ.

Каламалла, вĕсем пурте çĕршыва кирлĕ ĕçре вăй хунă. Сăмахран, Надьăпа Сергей Ивановсем Шупашкарти ярмăрккара суту-илӳ павильонне тытаççĕ, çав вăхăтрах ялти амăшне пулăшса тăрассине тĕп вырăна хураççĕ. Ывăлĕ Сергей нумай çул ГИБДД тытăмĕнче, мăшăрĕ Марина педагогра, Зоя суту-илӳре, Люда Вăрнарти кабель завочĕн тĕп бухгалтерĕнче ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă. Кĕçĕн хĕрĕ Оля яла куçиччен Патшалăх Канашĕн тытăмĕнчи яваплă ĕçре тăрăшнă, халĕ ялти библиотекăра вăй хурать, мăшăрĕ Юра халăха культура мероприятийĕсене ирттерсе тивĕçтерет. Вĕсем пурте амăшĕн сывлăхĕпе интересленсех тăраççĕ, ялта пурăнакансем ирĕн-каçăн ун тавра кускалаççĕ, кил-çурт таврашĕнчи ĕçсене пурнăçлаççĕ, ватлăхне канлĕ туса пама тăрăшаççĕ. Шупашкарти ывăлĕ, вăрăм çула кĕскетсе, кашни эрнере тенĕ пек килсе каять, кил-çурт таврашĕнчи юсав ĕçĕсене асăрхаса тăрать. Çавăн пек пархатарлă ачасем ӳстернĕ Анна Романовнапа Елизар Иванович Кумаляковсем.

Ку çемьесен тепĕр лайăх енĕ – никама та усал сунманни, пуринпе те тараватлă пулни, нушана лекнĕ çынна пулăшасси. Анна Романовнан тараватлăхĕ çинчен хаçатăн 2017 çулхи утă уйăхĕн 23-мĕшĕнче тухнă 58-мĕш номерĕнче каласа кăтартнăччĕ-ха. Унта вăл кĕсье телефонĕпе йăнăш лекнĕ хĕрарăма хăшĕ-пĕри пек хăтăрса тăкманни, йĕркеллĕ калаçса туслашса кайни çинчен çырнăччĕ. Тата тепĕр ырă тĕслĕх. Çĕмĕрле тăрăхĕнчи Красный Октябрь ялĕнчи тăхлачи Роза Карповна упăшки вилнĕ хыççăн пĕччен тăрса юлса йывăрлăха кĕрсе ӳксен ăна чи малтан Кумаляковсем алă тăснă, хăйсен хӳттине илсе Пăртаса куçма пулăшнă. Халĕ икĕ тăхлач пĕр чĕлхерен тенĕ пек пурăнаççĕ.

Çак тараватлă çемье пăртассемшĕн ырă та тĕрĕс тĕслĕх пулса тăрать.

**Геннадий ИВАНОВ**
Пăртас

# Юлташ пулмалла

**Çул çитмен ачасене уйрăм тимлĕх кирлĕ. Вĕсем сиенлĕ йăласемпе çыхланас хăрушлăх пысăк. ЧР Сывлăх сыхлавĕн министерствин тĕп психиатрĕ-наркологĕ Лилия Дорофеева ачасемпе çамрăксене наркомани хăрушлăхĕнчен упрассипе мĕнле ĕçленипе паллаштарать.**

**– Çул çитменнисем хушшинче наркотиксемпе усă курнă тĕслĕх час-часах тĕл пулать-и?**

– Ку енĕпе лару-тăру çăмăлах мар. Анчах çакна асра тытмалла: наркотиксемпе усă курасси ахальтен тытăнман. Нарколог патĕнче шутра тăракан çул çитмен çамрăксен 90 процентĕн харпăр хăйне тытма пĕлменни палăрать. Вĕсем вĕренесшĕн мар, ашшĕ-амăшĕпе тата вĕрентекенсемпе хирĕçеççĕ, килтен тухса кайнă тĕслĕхсем те пур.

Ирех наркотик тутанни питĕ хăрушă. Çамрăк организм ăна питĕ хăвăрт хăнăхать. Çул çитмен ачан психики улшăнма пултарать. Вăл шкул программине ăса хываймасть. Спорт мероприятийĕсене хутшăнмасть. Çапла майпа япăх ушкăнсене лекет. Наркотике эрех-сăрапа пĕрле ĕçни тата хăрушăрах. Çул çитмен çав çамрăксене наркотиксем сутма, укçаллă пулма илĕртни усалли патне илсе çитерет.

**– Ашшĕ-амăшĕпе вĕрентекенсен хăш енĕпе уйрăмах тимлĕ пулмалла?**

– Ача улшăнни тӳрех палăрать. Вăл çывăрма иртерех выртать е çĕрĕпех çывăрмасть. Ирхине вара хăйне çывăрнă хыççăнхи пекех аван туять. Унăн кăмăлĕ питĕ хăвăрт улшăнать. Апат çиме пăрахать, начарланса каять. Юратнă апатне те ăша ямасть. Чун киленĕçĕ интереслентерме пăрахать, хăйне манерлĕ юлташсем тупăнаççĕ. Телефонпа вĕсемпе вăл шăппăнраххăн калаçать. Ача çывăх çыннисемпе çыхăну тытма, чунне уçма пăрахать. «Ют» пулса тăрать.

**– Ашшĕ-амăшĕн ачи наркотиксемпе усă курнине сиссессĕн мĕн тумалла? Камран пулăшу ыйтмалла?**

– Ыйтăва кая ан хăварăр. Ачана ан ятлăр. Ятлани, вĕрентсе калани пулăшмĕ. Сирĕн тĕп тĕллев – ачапа пĕр чĕлхе тупасси. Паллах, специалистсенчен пулăшу ыйтмалла. Ачăршăн юлташ вырăнĕнче пулăр, ăна пулăшма, хавхалантарма тăрăшăр. Унăн хăйне юратакансем, ăна пулăшма яланах хатĕр çынсем пуррине туймалла.

# Налук хумалла е çук?

**Юлашки вăхăтра ача çук граждансене ятарлă налук – уйăхсерен 30–40 пин тенкĕ тӳлеттересси – пирки хытах шавлаççĕ. Çак шухăшпа РФ Патшалăх Думин депутачĕ Андрей Гурулев паллаштарнă. Паллах, ку сăмахпа калани кăна. Думăна саккун проектне тăратман. Депутат ачасăррисене налук тӳлеттерни СССР чухнех пулнине те палăртнă.**

1941–1992 çулсенче пĕччен пурăнакансем, ача çук граждансем налук тӳленĕ. 20–50 çулсенчи арçынсен, 20–45 çулсенчи качча кайнă хĕрарăмсен ĕç укçин 6 процентне тытса юлнă. Сывлăха кура ача алăра тытайманнисене е пепкийĕ вилнисене налук тӳлессинчен хăтарнă. Паллах ĕнтĕ, общественность Андрей Гурулев шухăшне сивлет. Иртнĕ ĕмĕрте кил-çурт ыйтăвĕсене татса парас ыйту ансатрах пулнине те çирĕплетет-ха вăл. Хăшпĕрисем ачасăррисене налук тӳлеттермеллех тесе шутлаççĕ. Патшалăх, ав, амăшĕн капиталне, субсидисем, уйăхсеренхи тӳлевсем уйăрать пулсан та кăмăлсăррисем çав-çавах тупăнаççĕ. Хастарсен шучĕпе, çынсем 30–40 çул каяллипе танлаштарсан хальхи вăхăтра чылай лайăхрах пурăнаççĕ. Анчах та пурпĕрех вăл-ку мăшăрсем пепкеллĕ пулма васкамаççĕ.

Ачасăррисене налук тӳлеттерни демографи лару-тăрăвне лайăхлатма пулăшĕ-и? Раççейре пурăнакансен йышне ӳстерĕши? Социаллă экономика тĕпчевĕсен институчĕн директорĕ Алексей Зубец çирĕплетнĕ тăрăх, 35 çултан иртнĕ пĕр ачаллă граждансене те налук тӳлеттермелле, мĕншĕн тесен ун шучĕпе вĕсем «тулли мар çемье» имĕш. Паллă ĕнтĕ, экономист сĕнĕвне соцсетьсемпе усă куракансем критикленĕ.

Патшалăх Думин спикерĕ Вячеслав Володин хăшпĕр депутатсене ку налук пирки пуç тавра лайăх шухăшламасăр обществăра пăлхану çĕклемелле мар, тенĕ. «Ача çуратмалла е çук... Ку хĕрарăм умĕнче тăракан ыйту. Унăн ирĕкĕ», – палăртнă парламентарий. Анчах та ачапча кирлĕ мар тесе пропагандăлакансене явап тыттарассипе çыхăннă саккун проектне Патшалăх Думинче раштав уйăхĕ вĕçлениччен пăхса тухаççех. Çак пуçарăва ырлани çемьесене хӳтĕлеме пулăшĕ.

Республикăра ачасăр мăшăрсен йышĕ чактăр тесе тăрăшаççĕ. Тĕслĕхрен, Мендельсон маршĕ янранă çамрăк çемьесен 17 процентĕ пепке çуратайманнипе нушаланать. Вĕсене ĕнтĕ ЭКО мелĕ пулăшма пултарать. Процедура валли ОМС фончĕ укçа-тенкĕ уйăрать. ЭКО пулăшнипе çут тĕнчене килнĕ пепкесен йышĕ республикăра 14 процент ӳснĕ. Репродуктивлă технологисемпе пирĕн регионта 1995 çултанпа усă кураççĕ. Çак тапхăрта 7,5 пин мăшăр сиплев курсĕ витĕр тухнă, 2800 ача çуралнă.

Паллах, медицина пулăшăвĕсĕрех çĕнĕ чун çак тĕнчене килет-тĕк, ашшĕ-амăшĕ телейлĕ вара. Ача-пăча сасси пӳрт тултарать, теççĕ. Вăрнар тăрăхĕнче те нумай ачаллă çемьесем чылай.

**Елена ГРИГОРЬЕВА**